Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

59 (7590) № ✻ Шăмат кун, 2008 çулхи августăн (çурла) 9-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Августăн 9-мĕшĕ – Физкультурниксен кунĕ

***Хисеплĕ физкультурниксем, спортсменсем, спортпа туслă ентешĕмĕрсем тата физкультура юхăмĕн ветеранĕсем!***

Сире Физкультурниксен кунĕ ячĕпе саламлатăп.

Физкультурăпа спорт кашни çыннăн пурнăçĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ. Спортпа туслă çын – сывлăхлă çын. Сывлăхлă пулсан вара ĕçлес те килет, ĕç те ăнать, тата та ытларах тăрăшас килет. Сывлăхлă, çирĕп кăмăл-туйăмлă, сывă пурнăç йĕркине тытса пыракан çынсем район тĕрекĕ пулса тăраççĕ те. Вĕсем, нимĕнле йывăрлăхран хăрамасăр, умри тĕллевсене пурнăçлаççĕ. Районта пурăнакансем спортпа туслă пулччăр тесе, çамрăк ăру çакна мĕн ачаран ăша хывса ӳстĕр тесе эсир нумай тăрăшатăр. Хăвăрăн ăсталăхăрпа пуян опытăра паратăр вĕсене. Тăрăшни вара куç умĕнчех. Пирĕн районти спортсменсем республикăра кăна мар, Раççей, Европа, тĕнче шайĕнче пысăк кăтартусем тăваççĕ. Тавах сире çакăншăн.

Спорта аталантарма районта майсем çителĕклех. Республика кунĕ умĕн Муркашра физкультурăпа спорт комплексĕ уçăлчĕ. Ырăнсенче те спорт залĕсем ĕçлеççĕ, спорт площадкисене йĕркелеççĕ, тĕрлĕрен спорт секцийĕсем ĕçлеççĕ. Юлашки вăхăтра çынсем спорт енне ытларах туртăнма пуçланине çирĕплетет çакă. Эсир малашне çак туйăма татах та аталантарма пулăшасса, çынсене ытларах та ытларах спорт мероприятийĕсене явăçтарасса шанатăп. Пурсăра та çирĕп сывлăх, телей, юрату, мал туртăмлăх, хавхалану, ĕçре ăнăçу сунатăп.

**Район пуçлăхĕ**
**Ю.А. ИВАНОВ.**

## Августăн 10-мĕшĕ – Строительсен кунĕ

***Хисеплĕ строительсем тата çак ĕçĕн ветеранĕсем!***

Сире професси уявĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Строитель ĕçĕ яланах чыслă-сумлă пулнă. Эсир тăрăшнипех ĕнтĕ тăван районăмăр та илемленсех пырать. Çулран çул çĕнĕ те капмар çуртсем çĕкленеççĕ, çĕнĕ асфальт çулсем çуталса выртаççĕ. Кашни ялтах, килтех çутçанталăк газĕ çунать. Сирĕн пархатарлă ĕçĕре пула халăхăн пурнăç шайĕ хăпарсах пырать. Тавах сире çакăншăн.

Паян сирĕн умăрта пысăк тĕллев – çулталăк вĕçлениччен кашни ял патне асфальт çул сарса пĕтермелле, «Раççей гражданĕсене – меллĕ те хăтлă çурт-йĕр» наци проектне пурнăçа кĕртессипе тата та тăрăшарах ĕçлемелле. Республика кунĕ тĕлне кĕске вăхăтрах нумай ĕç туса ирттернине курса, эсир умри задачăсене пурнăçласса та шанас килет.

Сире малашне те ялсен социаллă инфратытăмне аталантарас, халăхăн социаллă пурнăçне лайăхлатас ĕçре ăнăçусем сунатăп. Палăртнисем пурнăçа кĕрсе пыччăр. Сывлăхăр çирĕп пултăр, ĕçлес кăмăл ӳссех пытăр. Телей, юрату, çемьери килĕшӳпе тату пурнăç хавхалантарсах пыччăр.

**Район пуçлăхĕ**
**Ю.А. ИВАНОВ.**

## Республикăра

# Дмитрий Медведев Чăваш Енте пулчĕ



***Августăн 6-мĕшĕнче РФ Президенчĕ Д.А. Медведев (вăл отпускра Атăл тăрăх çул çӳреве тухнă) Шупашкара çитнĕ.***

***Каç кӳлĕм Д.А. Медведев пирĕн президентпа Н.В. Федоровпа тĕл пулнă. Николай Васильевич юлашки виçĕ çулта республикăра 500 тĕслĕх библиотека сетьне йĕркеленине, пурне те компьютерсемпе тивĕçтернине, Интернетпа çыхăнтарнине палăртнă. Ялта пурăнакансем те халĕ тĕнче культурин пуянлăхĕпе паллашма пултараççĕ.***

***Раççей Президенчĕ «вулассин ырă йĕркисене» тепĕр хут чĕртсе тăратасси çинчен каланă. «Чăвашсен опычĕпе усă курса библиотекăсене пирĕн паянхи куна тивĕçтермелле тумалла»,– тенĕ вăл.***

**Сăн ӳкерчĕкре: тĕл пулу вăхăтĕнче.**

## Уяв умĕнхи интервью

# Умри тĕллевсем тата пысăкрах

***Кашни профессиех лайăх, хăв килĕштернине суйласа ил, текен халăх каларăшне пирĕнтен кашниех илтнĕ ĕнтĕ. Ыран хăйсен профессии уявне паллă тăвакансем вара чи лайăх профессии – строитель тесе шутлаççĕ. Йăнăшмаççĕ. Хăйĕн ĕçне юратакан кашни çынах хăй суйланă профессии пирки çапла шутламалла та. Апла пулсан вăл хăйĕн вырăнĕнчех, хăйĕн ĕçне кирлĕ пек тăвать.***

***Районти строительсем çинчен те çавнах калас килет. Пăхăр-ха сăнарах: илемленсех, капмарлансах пырать вĕт район центрĕ те, ялсенчи çуртсем те пĕри тепринчен илемлĕрех.***

***Кашни уяв умĕн халиччен мĕн тунине пĕтĕмлетни вырăнлă. Районти строительсем ку таранччен тунă ĕçĕсемпе малашнехи ĕмĕт-тĕллевĕсем çинчен каласа пама ыйтрăм та эпĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕн - капиталлă строительство, архитектура, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçинчен В.Г. НИКИТИНРАН.***

**– Владимир Германович, строительсем юлашки вăхăтра туса ирттернĕ ĕçсенчен пуçлар-ха калаçăва.**

– Чи малтанах çакна палăртмалла. Республика кунне хатĕрленнĕ май района тирпей-илем кĕртес енĕпе ĕçсем нумай туса ирттернĕ. Муркашри Ленин, Советская, Гагарин, Чапаев, Октябре – 50 çул урамсенчи çулсемпе тротуарсене турăмăр, юсарăмăр. Физкультурăпа спорт комплексĕ хыçĕнчи пĕвене тирпейлесе унта фонтан вырнаçтартăмăр.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

## Вырма – 2008

***Районти комисси вырмана хутшăнакан комбайнерсен ăмăртăвĕн августăн 1–7-мĕшĕсенчи итогĕсене пĕтĕмлетнĕ. Комбайнсен класне кура Р.В. Кузнецов (Суворов яч. хис.), А.В. Валежников («Свобода»), Ю.П. Егоров (Ильич яч. хис.), Ю.С. Иванова («Восток») малта.***

## Малта пыракан организацисенче

# Проект хăватне алла илеççĕ



тсе пынисене тата пирĕнпе тачă çыхăну тытакан партнерсене мирлĕ ĕçченсен уявĕпе – Строительсен кунĕпе – саламлатăп. Пĕрлехи тăрăшулăхпа эпир экономикăн çĕнĕ чиккисене те çĕнессе, малалла шанчăклăн утасса шанатăп. Ыранхи кун паянхинчен лайăхрах та ăнăçуллăрах пултăр тесе пурне те çирĕп сывлăх, ырă шанăç, телей те юрату сунатăп. Çапла пултăр, – терĕ хамăр тĕл пулу пуçламăшĕнчех калаçăва уяв сĕмĕ кĕртсе завод директорĕн çумĕ Юрий Иванович Петров.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче рынок хутшăнăвĕсем пуçлансан уксахлама пуçланă кирпĕч завочĕ юлашки çулсенче харпăрлăх формине улăштарсан çĕнĕлле сывласа ячĕ. Паян кунта хисеппе пĕрлех пахалăх малти вырăнта тăрать. Çакна заводра ĕçлекен кашни ĕçчен çирĕплетет. Кирпĕч заводĕнчен продукци туянакансем те Муркашсем пахалăха тĕпе хунăран хăйсем кунта килнине палăртаççĕ.

**(Вĕçĕ 5-мĕш стр.)**

Çакăн пек пĕтĕмлетӳпе тухрăм Строительсен кунĕ умĕн «Муркашри кирпĕч завочĕ» уçă акционерлă обществăран. Манăн сăмахăмсене заводра та, унăн территорийĕнче те ĕç вĕресе тăни çирĕплетет.

– Район хаçачĕ пирĕн патăмăра килнине эпĕ хăйне евĕр уяв парни тесе йышăнатăп. Çакăнпа усă курса хамăр дирекци ячĕпе заводра паян ĕçлекенсене, кунта чылай çул вăй хурса тивĕçлĕ канăва тухнисене, заводра никĕслекенсемпе ăна тĕрлĕ çулсенче ер-



## Юбилей

# Саламлатпăр

Хаклăран та хаклă хĕрĕме, мăшăра, аннене, хунямана, аппана, кумана – Москакасси ялĕнче пурăнакан **Галина Федоровна ГАВРИЛОВАНА** сумлă юбилейпе – 60 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, инçе çул пек вăрăм ĕмĕр, çăл куç пек таппа тăракан вăй-хал, лăпкă пурнăç сунатпăр. Эс пурри пирĕншĕн пуянлăх, савăнăç, телей.

Татах нумай-нумай çул пире савăнтарса пурăн. Чирчĕр таврашĕ санран пăрăнса иртср. Тайма пуç сана, хаклăран та хаклă çыннăмăр, пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, икĕ хĕрĕ, кĕрĕвĕ, ывăлĕпе кинĕ, 4 мăнукĕ тата ытти тăванĕсем.**

---

Юратнă мăшăра, аннене, кукамая – Муркаш ялĕнче пурăнакан **Зоя Зосимовна ХОРЬКОВАНА** сумлă юбилей – 55 çул тултарнă ятпа



чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр, мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Вăрăм кун-çул, тулли телей, çирĕп сывлăх пултăр. Эс пурришĕн савăнатпăр, санпа хамăра телейлĕ туятпăр. Тайма пуç сана пуриншĕн те.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем Димăпа Женя, çывăх тăванĕсем, тăхлачипе хăти.**



Юратнă та хаклă çыннăмăра – Отарккă ялĕнче пурăнакан **Анфиса Спиридоновна НИКОЛАЕВАНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн чĕререн тав тăватпăр. Малалла та сан пирĕнпе пĕрле савăнса пурăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, хăти-тăхлачисем.**

---



Юратнă йăмăка, мăшăра, аннене, асаннене – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Августина Кирилловна НОДЫКОВАНА** юбилей ячĕпе чи ăшă кăмăлпа саламлатпăр, çĕре çити пуç таятпăр, ырлăх-сывлăх сунатпăр. Ачусемпе, мăнукусемпе, тăванусемпе савăнса пурăнмалла пултăр. Тавах сана эсĕ пурришĕн. Сывлăхлă пул, ан чирле, малашне те пире савăнтарса пурăн.

**Саламлаканĕсем: аппăшĕсем, мăшăрĕ, ывăлĕсем, кинĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем.**

---



Хаклăран та хаклă пирĕн чи çывăх çынна – Вомпăкасси ялĕнче пурăнакан **Юлия Ивановна СИБЯКОВАНА** августăн 10-мĕшĕнче 85 çул тултарнă ятпа ăшă та çепĕç туйăмсемпе саламлатпăр. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн, йывăр чухне пирĕн чун ыратăвне хăвăн чĕрӳ витĕр кăларнăшăн, пире юратса çитĕнтерсе тĕрĕс çулпа вĕçтерсе янăшăн.

Сывлăху сан çирĕп пултăр, чир-чĕр мĕнне ан пĕлтĕр, кун-çулу вăрăм та телейлĕ пултăр. Турă сана инкек-синкекрен сыхлатăр. Эпир сана юрататпăр, сана тав туса сан умăнта çĕре çити пуç таятпăр, сурпан пек вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Сĕтелӳ çăкăр-тăвартан, кил-çурту тăван-пĕтентен ан татăлччăр. Утас çулу такăр, пурнас çулу вăрăм пултăр.

Сахал мар эс курнă хура-шур,
Пурпĕр вăй çитернĕ йывăра çĕнмешкĕн.
Уншăн тав тумашкăн пирĕн тивĕç пур,
Тивĕç пур чунтан хисеплемешкĕн.
Пурнăçри мĕн пур пăтăрмахран
Кулленех сана упратăр Турă,
Вăл сана хăтартăр асапран,
Патăр сывлăх, ырă чунлă тутăр.
Çавăнпа тем чухлĕ пурăнсан та
Эс ан ватăл ĕмĕр, нихăçан та.

**Юбилей ячĕпе саламласа юратнă ачисем, кĕрĕвĕпе кинĕсем, мăнукĕсем, прамăнукĕсем, тăванĕсем, пускилсем.**